**20.04.2021.**

**6 Б класс чăваш чĕлхи урокĕ валли хатĕрленĕ уçă урок планĕ.**

**Урок теми:** Чăваш чĕлхи эрни.

**Урок тĕсĕ:** Пĕтĕмлетӳ урокĕ. Вăйă- урок.

**Урок тĕллевĕсем:**
1.Вĕренекенсен сăмах йышне пуянлатасси, чăваш чĕлхи эрни вали вĕреннĕ темăсене çирĕплетсе хăварасси.

2. Тавçăрулăхпа тимлĕхе ӳстересси.

3.Вĕренекенсен хушшинчи туслăха çирĕплетесси, чăваш чĕлхине вĕренме хавхалантарасси.

**Курăмлăх (кăтарту) хатĕрĕсем:** компьютер, проектор, вĕренӳ кĕнеки, мультимедиллĕ презентации, ĕçсем

**Урок юхăмĕ**

**Класа йĕркелени.** Урок темипе тата тĕллевĕпе паллаштарасси.

Кам тăван чĕлхене юратмасть!
Вăл тăван амăшне юратмасть!
Кам тăван амăшне юратмасть!
Вăл тăван халăхне юратмасть!
Кам тăван халăхне юратмасть!
Вăл Тăван çĕр-шывне юратмасть!

I. Ачасем ушкăнсем çине пайланса капитансене суйлаççĕ.
Пĕрремĕш ушкăн «Чĕлхеçĕсем». Иккĕмĕш ушкăн «Тĕпчевçесем»

II. Пĕрремĕш ĕç. «Корректор». Икĕ ушкăн валли карточкăсем хатĕрленĕ. Предложенисене тĕрĕс йĕркелесе текст тăвасси.

*Шкулта вĕренетĕп эпĕ. Вĕренме килĕшет мана. Нумай ача вĕренет кунта. Шăллăм манăн çӳрет пĕрремĕш класа. Пушă вăхăтра çӳретĕп кружока. Хамăр мана шкул килĕшет.*

Эпĕ шкулта вĕренетĕп. Мана шкулта вĕренме килĕшет. Кунта нумай ача вĕренет. Манăн шăллăм пĕрремĕш класса çӳрет. Пушă вăхăтра кружока çӳретĕп. Хамăр шкул манна килĕшет.

III. Иккĕмĕш ĕç. «Асамлă чечек « (хытă хутран касса кăларнă çичĕ çеçкеллĕ чечек). Кашни çеçки урăх тĕслĕ, тӳнтер енне ыйту çырса хунă.

Ыйтусем:
Уйăх, хула, кăмпа, йывăç, эрнери кунсем, хĕл каçма юлакан кайăксем, пахча çимĕç ячĕсем, çырла.

IV. Виççĕмĕш ĕç. **Хамăр вăйă.**

V. Тăваттăмĕш ĕç. Физкультура саманчĕ.

Аллăма çӳле çĕклетĕп,
Енчен еннелле суллатăп.
Ку вăл манăн аллăм мар,
Йывăç тăрри авăнать.
Аллăма çĕре усатăп,
Халĕ çапларах силлетеп.
Ку вăл манăн аллăм мар,
Çил сывлăма сапалать.
Икĕ аллăма саратăп,
Çӳлелле, аялалла хускататăп.
Ку вăл манăн аллăм мар,
Кайăк çунатне суллать.
Халĕ шăппăн çеç ларатăп,
Вĕрентекене тăнлатăп.

Урок тăршшĕпех ачасем тĕрлĕ ĕçсем пурнăçланă хушăра магнитофонпа хуллен кăна чăваш кĕвви янăрать.

VI . Жюри ăмăртăва пĕтĕмлетни. Икĕ ушкăнĕ те лайăх ĕçлерĕ. Ачасем панă ĕçсене тĕрĕс те хăвăрт пурнăçлама тăрăшрĕç, пĕр-пĕрне пулăшса пычĕç. Вĕсем туслă пулни палăрчĕ. Баллсен шучĕ икĕ ушкăнăн та пĕр пек. Çак ăмăртура туслăх çĕнтерчĕ. Пĕчĕк парнесем пани.

VII. **<u>Ачасен ĕçне хаклани</u>**:

Ачасем, сирĕн умăрта 3,4,5 паллăсем выртаççĕ.

-сире урок питĕ килĕшрĕ пулсан 5 палла çĕклĕр

- килĕшрĕ пулсан - 4 палла çĕклĕр

-вуçех килĕшмерĕ пулсан -3 палла çĕклĕр.

VIII. Ачасемпе сыв пуллашни.

Вырăсла та калаçар,
Чăвашла та сăмахлар,
Акăлчанла ăнланар.
Виççĕшĕ те халь вĕсем
Чуна çывăх чĕлхесем.